Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

34 (8100) № ✻ Шăмат кун, 2013 ҫулхи ҫу (май) уйăхĕн 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Н.В. Никольский ҫуралнăранпа - 135 ҫул

## Ентешĕмĕрпе мăнаҫланатпăр



*Чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, «Хыпар» хаҫат никĕслевҫи, общество ĕҫченĕ Николай Васильевич Никольский ҫуралнăранпа 135 ҫул ҫитнине ĕнер Ваҫкасси тăрăхĕнче анлăн уявларĕҫ.*

*Сумлă ентеше чыслама районпа республикăран кăна мар, Пушкăртпа Чĕмпĕр тăрăхĕсенчен те, Мускавран та хăнасем килнĕ. Пухăннисем малтан Купăрля ялĕнче Никольские асăнса лартнă палăк умĕнче митинг ирттерчĕҫ. Палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕҫ.*

*Хыҫҫăн Николай Никольский ҫуралнăранпа 135 ҫул ҫитнине халалланă регионсем хушшинчи ăслăлăхпа практика конференцийĕ ĕҫлерĕ. Ăна район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ростислав Тимофеев, район пуҫлăхĕ, Ильич ячĕллĕ хуҫалăх ертӳҫи Игорь Николаев уҫрĕҫ. Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕн президенчĕ Евгений Ерагин, «Хыпар» хаҫатăн тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев, Шупашкарти Н.В. Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕн директорĕ Валерий Сапожников, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ Георгий Матвеев пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр чăваш халăхĕ умĕнче тунă ĕҫĕсене хакласа сăмах каларĕҫ.*

*Малалла конференци 6 секцие пайланса ĕҫлерĕ. Пĕтĕмпе 64 доклад итленĕ.*

*Сăн ӳкерчĕкре: Николай Васильевич Никольские Купăрляра асăнса лартнă палăк умĕнче.*

**А. ТИХОНОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Срок – июнĕн 10-мĕшĕ

Строительство

***Республика кунĕччен уйăх ытларах кăна юлать. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансемшĕн вăл уйрăмах асра юлĕ. Уяв умĕн Мăн Сĕнтĕрте культурăпа кану центрне уҫма палăртаҫҫĕ. Паян кунта курав залĕнче строительство ĕҫĕсем пыраҫҫĕ. Кунти ĕҫсем мĕнле пынипе Чăваш Республикин культура, национальноҫ тата архив ĕҫĕсен министрĕ В. ЕФИМОВ паллашнă.***

Вадим Петрович район администрацийĕн пуҫлăхĕпе Р. Тимофеевпа, район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕпе – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуҫлăхĕпе В. Никитинпа, культура тата архив ĕҫĕсен пайĕн пуҫлăхĕпе Е. Черновăпа пĕрле подрядчиксемпе тĕл пулнă, кулленхи ыйтусене вырăнта сӳтсе явнă.

Ĕҫ планеркине ҫавăн пекех Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ А. Лаптев, «ПМК «Водоснабжения» ООО генеральнăй директорĕ В. Павлов, «Ядрингазсервис» ООО прорабĕ В. Сидоров, Мăн Сĕнтĕрти культурăпа кану центрĕн директорĕ И. Зайцев хутшăннă.

Чăваш Республикин культура, национальноҫ тата архив ĕҫĕсен министрĕ В. Ефимов тата ĕҫ планеркине хутшăннисем культура учрежденийĕн пур пӳлĕмĕсене те, таврари территорие те пăхса ҫаврăннă. Министр хăй кунта юлашки хут пулнăранпа мĕн-мĕн тунипе интересленнĕ. Унччен вара вăл асăннă объектра пĕрлехи информаци кунĕ чухне кăҫалхи март уйăхĕнче пулнăччĕ.

«ПМК «Водоснабжения» ООО генеральнăй директорĕ В. Павлов строительсен малашнехи ĕҫĕсем ҫинчен каласа панă. Вăл палартнă тăрăх предприяти строительство ĕҫĕсене июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне вĕҫлет. Газ кĕртессипе, карта тытассипе те чăрмав пулмалла мар. Ҫывăх вăхăтрах строительсем территорие тирпей-илем кĕртме пуҫăнаҫҫĕ.

«Ядрингазсервис» ООО ĕҫченĕсем те активлăх кăтартаҫҫĕ. Вĕсем культурăпа кану центрĕнчи шалти ĕҫсене июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕҫлеме палăртаҫҫĕ.

Ĕҫ планерки вăхăтĕнче В. Ефимов тата Р. Тимофеев хăш-пĕр енпе асăрхаттарусем тунă, сĕнӳсем панă. Объекта хута ямалли срока палăртнă – июнĕн 10-мĕшĕ. Ростислав Николаевич палăртнă тăрăх объекта савăнăҫлă ларутăрура уҫнине районăн юбилейлă «Акатуйне» тата, паллă ĕнтĕ, Республика кунне халалласҫĕ.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă аннене, кукама, мамака, тăхлачăна, пускиле – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Фекла Никифоровна ИВАНОВĂНА** майăн 20-мĕшĕнче 85 ҫул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ăна ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-ҫул, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Турри пулăшса вăй-хал парнелетĕр, чирчĕртен упраса тăтăр. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурри пирĕншĕн телей.

**Саламлаканĕсем: виҫĕ хĕрĕ, икĕ ывăлĕ, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, 15 мăнукĕ, 4 кĕҫĕн мăнукĕ, тăхлачисем тата пускилсем, Осиповсен, Яковлевсен, Михайловсен, Ивановсен ҫемйисем.**

## Ҫĕнĕ программа йышăннă

Лару

Майăн 15-мĕшĕнче Чăваш Ен Правительствин Председателĕ Иван Моторин Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвне ирттернĕ.

Правительство членĕсем хăш-пĕр саккун проекчĕсене ырланă, ҫавăн пекех республикăн 2013 ҫулхи бюджетне пĕрремĕш кварталта пурнăҫлани ҫинчен калакан отчета ҫирĕплетнĕ. Министрсен Кабинечĕн Председателĕн ҫумĕ – Чăваш Ен финанс министрĕ Михаил Ноздряков палăртнă тăрăх пĕтĕмĕшле бюджета тупăшсем енĕпе 10 млрд та 505,7 пин тенкĕ пурнăҫланă.

ЧР Министрсен Кабинечĕн 2012 ҫулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнчи 370 № йышăнăвне улшăнусем кĕртме йышăннă. Ҫапла вара сивĕ тата вĕри шывпа тивĕҫтерессин нормативĕсен ҫĕнĕ виҫисене палăртнă. Ҫирĕплетнĕ нормативсен виҫине темиҫе хут пĕчĕклетнĕ. Ҫĕнĕ нормативсем 2013 ҫулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕреҫҫĕ. Ҫапла вара граждансем коммуналлă услугăсемшĕн сахалрах тӳлеме пуҫăнаҫҫĕ.

Ҫынсене медицина пулăшăвĕпе тивĕҫтерессине лайăхлатас, медицина наукин ҫитĕнĕвĕсемпе анлăрах усă курас тĕллевпе республика Правительствин членĕсем «Сывлăха сыхлассине 2013 – 2020 ҫулсенче аталантарасси» патшалăх программине йышăннă. Ун шутĕнче 10 подпрограмма.

Ҫур аки – 2013

## Ака вĕҫленсе пырать

Кăҫалхи ҫур аки планĕпе килĕшӳллĕн пурĕ 10737 гектар тырă-пулă акса хăвармалла. Ĕнерхи кун тĕлне тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуҫалăхсем акана хатĕр уй-хирсене пурĕ 8308 гектар (77 процент) шуратса хăварма ĕлкĕрнĕ.

Хуҫалăхсем «иккĕмĕш ҫăкăр» лартас ĕҫе кӳлĕнчĕҫ. Ҫу уйăхĕн 17-мĕшĕ тĕлне ăна пĕтĕмпе 232 гектар (23 процент) лартнă. Ку ĕҫе «Герой» (90 гектар е 180 процент), Чкалов яч. хис. (122 гектар е 100 процент) пурнăҫланă.

Оперативлă кăтартусене пăхсан вырăнсенче пахча ҫимĕҫ лартассине 28 гектар ҫинче (41 процент) пурнăҫланă. Пахча ҫимĕҫе пуринчен те ытларах хальлĕхе «Свобода» хуҫалăхра акнă-лартнă: планпа пăхнă 5 гектар вырăнне 10 гектар.

**А. БЕЛОВ.**

## Министр пысăк хак пачĕ

Иртнĕ ытлари кун Чăваш Республикин информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева тата район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ростислав Тимофеев районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫат редакцийĕн ĕҫĕ-хĕлĕпе паллашрĕҫ.

«Муркаш районĕн «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫат редакцийĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ – республикăра чи ăнăҫлă аталанакан учрежденисенчен пĕри. Иртнĕ ҫул редакцие хаҫат кăларма республика бюджетĕнчен 1 миллион тенкĕ ытларах уйăрса панă. Коллектив вара хăй вăйĕпе 3 миллион та 559 пин тенкĕ ытларах ĕҫлесе илнĕ.

«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» тиражĕпе те малти ретре. Паян вăл 4977 экземплярпа пичетленет. Унран пысăкрах тиражпа Ҫĕмĕрле, Етĕрне, Патăрьел хаҫачĕсем ҫеҫ кун ҫути кураҫҫĕ.

Редакци коллективĕ ҫĕнĕ технологисене алла илессипе те ăнăҫлă ĕҫлет. Хаҫата ытти райхаҫатсенчен чылай маларах компьютерпа наборласа кăларма тытăннă. Пуринчен малтан хатĕр полосасене ftp-протоколпа усă курса «Чувашия» издательствăпа полиграфи комплексне пичетлеме ярса пама пуҫланă.

Пултаруллă коллектив ҫулленех тĕрлĕ конкурссенче ҫĕнтерет. Пĕрремĕш ҫул мар ĕнтĕ «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» «Прессăн ылтăн фончĕ» пахалăх паллине тивĕҫет.

Райхаҫатăн тĕп редакторĕ Анатолий Тихонов малашлăх планĕсемпе паллаштарчĕ.

Чăваш Республикин информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева редакци коллективĕн ĕҫне пысăка хурса хакларĕ. Пахалăхлă хаҫат кăларнине палăртрĕ, учреждени ăнăҫлă аталаннине асăнчĕ.

Район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ростислав Тимофеев вырăнти влаҫ органĕсемпе тачă ҫыхăнса ĕҫлеме сĕнӳсем пачĕ.

Редакци коллективĕн ĕҫченĕсемпе тĕл пулса министрпа район администрацийĕн пуҫлăхĕ чылай ыйтăва сӳтсе яврĕҫ.

**Хамăр инф.**

Пензăри инкек

## Телеграммăсем килеҫҫĕ

Кăҫалхи майăн 14-мĕшĕнче Пенза облаҫĕнче Вăрмар район ҫыннин микроавтобусĕ аварие лекни, ҫынсем вилни тата аманни пирки район хаҫачĕн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ.

Микроавтобус ҫинчи ҫынсем пурте Сочирен Олимп стройкисенче ĕҫленĕ хыҫҫăн тăван Чăваш Ене таврăннă пулнă. Микроавтобус ирхи 8 сехетре Константиновка ялĕ тĕлĕнче груз турттармалли МАЗ автомашинăпа ҫапăннă. Пассажирсенчен ытларахăшĕ ку вăхăтра ҫывăрнă, нихăшĕ те хăрушсăрлăх пиҫиххийĕпе ҫыхăнман. Чылай хушă руль умĕнче пулнă водитель те тĕлĕрсе кайнă пулас. Инкекре 10 ҫын вилнĕ, 9-ăн аманнă. Вилнисенчен пĕри Тăвай районĕнчен, ыттисем Вăрмар район ҫыннисем.

Малтанах сводкăсенче инкеке лекекенсем Таджикистан ҫыннисем тесе пĕлтернĕ пулнă. Кусем пирĕн республика ҫыннисем пулнине палăртсанах республика Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев хăй ҫĕр-шыв тулашĕнче пулнине пăхмасăрах чрезвычайлă лур-тăру енĕпе ĕҫлекен патшалăх комитечĕн ĕҫченĕсемпе вĕҫĕм ҫыхăнура пулнă. Раҫҫей чрезвычайлă луру-тăру министерствин Чăваш Енри управленийĕнче хĕрӳ лини 39-99-99 ĕҫлеме тытăннă.

Чăваш Ен Пуҫлăхĕ ҫул ҫинчи инкекре вилнисен ҫемйисемпе пĕрле хурланни ҫинчен пĕлтернĕ. Унăн хушăвне пурнăҫласа хальхи вăхăтра инкеке лекнисене, вилнисен ҫемйисене пулăшупа тивĕҫтереҫҫĕ, вĕсемпе психологсем ĕҫлеҫҫĕ.

Ҫак кунсенче Михаил Игнатьев ячĕпе телеграммăсем килеҫҫĕ. Ҫынсем Пенза облаҫĕнчи автокатастрофăра вилнисен ҫемйисемпе тата ҫывăх ҫыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле хурланни ҫинчен пĕлтереҫҫĕ. Кун пек телеграммăсем ҫак кунсенче Россотрудничество ертӳҫинчен Константин Косачевран, Раҫҫей Патшалăх Думин вĕренӳ енĕпе ĕҫлекен комитечĕн председателĕн ҫумĕнчен Алена Аршиновăран, Пенза облаҫĕн кĕпĕрнаттăрĕнчен Василий Бочкаревран килнĕ.

# Пысăк обязательствăсем тата кăмăл çирĕплĕхĕн çĕнтерĕвĕ

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ панă интервью**

***Юлашки икĕ уйăх хушшинче Чăваш Еншĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмсем тăтăшах пулса иртрĕç. Вăл шутра федераци министрĕсем килсе кайни те, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çĕр-шыв шайĕнчи кăна мар, пĕтĕм тĕнче пĕлтерĕшлĕ курăмлă правительство тата экономика мероприятийĕсене хутшăнни те. Пĕтĕмĕшле илсен Чăваш Ен аталанăвĕн малашлăхĕ çине те витĕм кӳрекен çак тата ытти пулăмсем пирки республика Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ REGNUM информаци агентствине панă интервьюра каласа панă.***



**REGNUM ИА: – Михаил Васильевич, нумаях пулмасть Владимир Путинпа пилĕк сехете яхăн пынă тӳрĕ калаçу çĕр-шыври паянхи ыйтусене палăртрĕ. Ку темăсем унччenех паллă ĕнтĕ, унта çĕнĕлĕх çук темелле. Çавăнпа пĕрлех патшалăх лидерĕ пĕтĕм наци çыннисемпе уçă калаçу ирттернĕ чухне регион влаçĕ валли те систерӳ пурах пулĕ. Эсир хăвăр тĕлĕшпе мĕнле систерӳ пирки асăнма пултаратăр?**

– Паянхи куншăн пĕлтерĕшлĕ темăсене çĕкленĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ тĕлĕшпе Раççей Президенчĕн шухăшĕсене пĕлме питĕ интереслĕ пулчĕ. Владимир Владимирович иртнĕ çулхи май уйăхĕнче йышăннă указсенче палăртнă çул-йĕртен пăрăнас маррине çирĕплетрĕ. Тепĕр майлă каласан регионсенчи ĕç тăвакан влаç органĕсен тĕп задачи улшăнмасть – ку вăл граждансен пурнăç шайне тăнăçлăн лайăхлатса пырасси, чи малтанах педагогика, медицина, социаллă тата бюджет сферинчи ытти ĕçченсен ĕç укçине ӳстерсе пырасси.

Эпир ĕç укçине çулталăк хушшинче тăватă тапхăрпа ӳстерме хамăр çине обязательство йышăнтăмăр. Пĕрремĕш хут январĕн 1-мĕшĕнчен ӳстертĕмĕр ĕнтĕ, кайран – апрелĕн 1-мĕшĕнчен. Çавăн пекех июльте тата октябрьте те ĕç укçи виçи ӳсмелле. Обязательствăсене пурнăçлатпăрах, çав тĕллевпе бюджетра 1,9 млрд тенкĕ пăхса хунă.

«Ача амăшĕн капиталĕн» программи унччен палăртнă пекех 2016 çулччenех вăйра пуласси те пĕлтерĕшлĕ самант тесе шутлатăп. Çакă пире малашне те ача çуратассине ӳстерессипе эффективлă политика тытса пыма май парĕ.

Регион влаçĕсем татса пама тивĕç ыйтусене асăнас пулсан вара вĕсенчен чи çивĕччи – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисен тарифĕсем ӳсни. «Тӳрĕ лини» вăхăтĕнче те ун пирки калаçу пулчĕ. Асăннă ыйтăва Чăваш Ен Правительстви куç ытамĕнчен вĕçертмест. Халĕ районсемпе хуласенче мĕн пулса иртнине тепĕр хут тĕплĕ пăхса тухатпăр, цифрăсене анализ тăватпăр.

**REGNUM ИА: – Юлашки кунсенчи палăрăмлă пулăмсенчен пĕри – эсир Мускавра Японипе Раççей форумне хутшăнни, Япони посольствинче Синдзо Абэ премьер-министрпа тĕл пулни. Чăваш Енпе Япони хушшинчи хутшăнусен малашлăхĕ ку хутĕнче мĕнлерех, хутшăнусем йĕркелеме тытăнса пăхнисем унччен те пулнă вĕт-ха?**

– Тĕл пулу Раççее Японин премьер-министрĕ официаллă майпа килнипе çыхăннă. Пĕр шикленмесĕрех калама пултаратăп, ку визита чăннипех те сенсациллĕ темелле. Вунă çул икĕ çĕр-шыв хушшинче хутшăнусем пулманпа пĕрех. Халĕ вара Япони Правительствин ертӳçи Мускава килет. Пĕччен те мар, чи пысăк бизнесменсен, ертсе пыракан корпорацисен ертӳçисен 120 çынлă йышĕпе пĕрле. Кун пек корпорацисем шутĕнче «Мицуи», «Мицубиси», «Тошиба», «Кавасаки», «Олимпус», Японин ял хуçалăх кооперативĕсен «Дзен-Но» федерацийĕ. 1 млрд доллар калăпăш инвестици платформи йĕркелеме документсене алă пуснă.

Раççейпе Япони хушшинчи хутшăнусене аталантарассин малашлăхĕн тĕп темисене виççĕ палăртнă – медицина, ял хуçалăхĕ тата экологипе çыхăннă хула строительстви. Çӳлте асăннă пур енĕпе те Чăваш Енре туса çитерейменнисем пур. Нумай ыйтусемпе, калăпăр экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса илессипе, ачасене пĕчĕкренех сывлăхлă апатлантарассине йĕркелессипе пирĕн позицисем пĕр пекех. Эпĕ премьер-министра хамăрăн тĕп экологи проекчĕ – йăлари хытă каяшсен полигонне тăвасси пирки кĕскен каласа патăм. Ку проект коммерциллĕ марри, ăна федераци шайĕнче йышăнни, ĕçсен пысăк калăпăшне пурнăçлани, пирĕн ăна Японин малта пыракан технологийĕсемпе усă курса вĕçлеме кăмăл пурри пирки пĕлтертĕм. Синдзо Абэ господин пирĕн сĕнӳсене пысăк тимлĕх уйăрчĕ, асăннă проекта пурнăçа кĕртме Япони фирмисем хутшăнассин ыйтăвне пĕрле сӳтсе явма шантарчĕ, эпир пĕр-пĕрин визит карточкисемпе ылмашăнтăмăр.

Уйрăмах çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Чăваш Ен Японипе Раççейăн экономика форумне хутшăнма тивĕçнĕ тата посольствăри йышăнăва чĕннĕ нумай мар Раççей регионĕсен шутĕнче пулчĕ. Çапла вара Япони пирĕн республикăра мĕн пулса иртнипе интересленнине палăртрĕ, Япони бизнесĕ килĕштерсе ĕçлессин кирек епле формине те йышăнма хатĕр пулнине кăтартса пачĕ.

**REGNUM ИА: – Çуркунне Раççей шайĕнчи пысăк мероприятисемпе пуян пулчĕ – Шупашкарти спорт форумĕ, Раççей Правительствин Дмитрий Медведев ертсе пынипе ирттернĕ ларăвĕнче эсир туса панă доклад, федераци министрĕ Вероника Скворцова килни тата хыççăн сывлăха сыхлас ĕçхĕл ыйтăвĕсемпе ирттернĕ пысăк канашлу, федерацин тепĕр министрĕ Николай Федоров – Ял хуçалăх министерствин пуçлăхĕ, Чăваш Енĕн пĕрремĕш Президенчĕ килни. Енчен те умĕнхи виçĕ мероприятире республикăна ку отрасльсен лидерĕ тесе палăртнă тата ыттисемшĕн тĕслĕхе лартнă пулсан, юлашки канашлура пачах тепĕр майлă, çитменлĕхсем пирки кăна калаçнă. Республикăра ял хуçалăхĕнче чăннипех те çавăн пекех япăх, сывлăха сыхлассинче тата физкультурăпа спортра лайăх-и вара?**

– Эсир пĕлетĕр-и, эпир кăтартулăхшăн мар, хамăр ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлатпăр. Енчен те федераци Правительстви Чăваш Енре массăллă спортпа физкультурăна аталантарассипе туса ирттерекен пирĕн ĕçсене, сывлăха сыхлассинчи, уйрăммăн илсен реабилитаци ыйтăвĕсем енĕпе (Раççей сывлăха сыхлас ĕç министрĕ хутшăннипе ирттернĕ пĕтĕм Раççей канашлăвне шăпах çак ыйтусене халалланăччĕ) ӳсĕмсене çапла хаклать пулсан, эпир япăх шайра мар. Статистика çавна кăтартса парать: юлашки çулсенче Чăваш Енре ĕçе вăхăтлăх хутшăнайманнин кунĕсен шучĕ 1,5 хут, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене пула вилекенсен шучĕ 16 процент чакнă, республикăра пурăнакансенчен кашни виççĕмĕшĕ паян физкультурăпа тата спортпа туслă.

Паллă ĕнтĕ, çакна валли инфраструктурăри улшăнусем май туса пачĕç. Хальхи вăхăтра мĕн пур ял районĕсенче физкультура тата сывлăха лайăхлатмалли 24 комплекс ĕçлет. Кунсăр пуçне идеологи ĕçĕн эффективлăхне те палăртмалла. Сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси модăна кĕрет.

Медицинăна мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ хывнă тата! Сывлăха сыхлассине модернизацилессин программипе кăна Чăваш Ен 4,8 млрд тенкĕне тивĕçнĕ. Ку вăл питĕ пысăк сумма. Танлаштарса пăхма: республика бюджечĕ те 40 млрд тенкĕрен кăшт пысăкрах кăна. Çакă вăл ытларах пысăк технологи мелĕсемлĕ медицина пулăшăвĕ парассине аталантарма та мар, чи малтанах больницăсемпе поликлиникăсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме. Вуншар çул ку тĕллевпе укçа-тенкĕ пачах уйăрман пулнă. Паян медицина пулăшăвĕ парасси услуга шутне кĕнĕ май сиплевĕн пысăк пахалăхĕ те, сервис та пулмалла, пациентсемпе тухтăрсем те хăйсене меллĕ те хăтлă туйччăр. Мĕншĕн тесен сывату процесĕнче пĕтĕмпех пĕлтерĕшлĕ, больницăри стенасен тĕсĕ таранах: хăйпăнакан сăрă тата тухтăр патне кĕрес текенсен черечĕ сывă çынна та чире яма пултараççĕ.

Ял хуçалăхне илес пулсан, республика яланах – эпĕ ял хуçалăх министрĕ, Николай Федоров Президент пулнă чухнех – кăтартусем енĕпе ял хуçалăхне аталантармалли патшалăх программине кĕртнисен пĕрремĕш теçеткинче шутланнă. Раççей Федерацийĕн ял хуçалăх министерствин хаклавĕпе çак тенденци «Агропромышленноç комплексне аталантарасси» наци проектне пурнăçлама пуçăннăранпах сыхланса юлать. Çапла, Чăваш Енĕн ял хуçалăхне объективлă сăлтавсене пула федераци шайĕнче малтисен ретне кĕртме çук. Çапах та вăл халăх хуçалăхĕн йĕркеллĕ аталанса пыракан отраслĕсен шутĕнче пулнă, ку халĕ те çаплах. Сăмахран, 2010 çулхи типĕ çанталăка шута илсен те, юлашки пилĕк çул хушшинче республикипе производство калăпăшĕн ӳсĕм индексĕ çуллен вăтамран 4 процентпа танлашнă. Ку вăл аван кăтарту.

Эпир хамăр ресурссене тата шалти резервсене пĕлетпĕр, хамăр çитменлĕхсене пĕлетпĕр тата вĕсем пирки уççăн калатпăр. Чунпа та, тĕрĕссипе те эпĕ – хресчен, çĕр çынни. Николай Васильевич та çавăн пекех. Ял хуçалăхĕ – питех те çăмăл мар тема, сисĕмлĕ, йывăрлăхсем пулнă, пур, пулĕç те. Вĕсенчен тарса пытанма май çук.

**REGNUM ИА: – Иртнĕ çулталăк республикăшăн ăнăçлă пуçланчĕ, Чăваш Ен машинăсем туса кăларассин отраслĕнчи кризислă лару-тăрăва пĕтерсе чылай хушă промышленноç производствин индексĕ енĕпе Атăлçи федераци округĕнче лидерсен шутĕнче пулчĕ. Республика экономикин пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсем 2013 çулхи пĕрремĕш кварталта еплерех?**

– 2012 çул пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн прогнозсем тӳрре тухрĕç. Октябрь уйăхĕнче кăтартусем чакма тытăнчĕç пулин те, эпир палăртнă пекех промышленноç производствин индексĕ 107,2 процентпа танлашрĕ. Кăçалхи çулталăк ун пекех ăнăçлă пуçланаймарĕ, промышленноç производствин индексĕ 82,9 процент пулчĕ. Çапах та çакă пирĕн прогнозсем йăнăш пулнине пĕлтермест. Çавна аса илтеретĕп: эпир яланах экономика аталанăвĕн икĕ вариантне туса хатĕрлетпĕр – ăнăçлине тата ытлашши шанăç кӳменнине.

Март уйăхĕнче лару-тăру майлашăнма тытăнчĕ. Февраль уйăхĕпе танлаштарсан промышленноç производствин калăпăшĕ 12,3 процент, продукци тирпейлекен производство калăпăшĕ 20,3 процент ӳсрĕç. Халĕ эпир çак цифрăсене тĕпе хуратпăр. Çавна палăртса хăварнă пулăттăм: федераци шайĕнче те тӳрлетӳсем тăваççĕ. Раççей экономика аталанăвĕн министерстви иртнĕ çул бюджет йĕркелессин тытăмне хывнă малтанхи прогноз цифрисене пĕчĕклетрĕ.

**REGNUM ИА: – Производство калăпăшĕ чакнин сăлтавĕ мĕнре-ха? Ку вăхăтлăх япала е 2008 – 2009 çулсенчи евĕр промышленноç производстви ерипен чакса пыма пуçăнни-и?**

– Кунта чи малтанах «Тракторные заводы» концерн ăнăçлă ĕçлеймерĕ, уйрăммăн илсен Канашри «Промтрактор-Вагон». Тĕп сăлтавĕсенчен пĕри – туса кăларакан продукцие шалти рынокра сахалрах ыйтма тытăнни. Таможня союзĕн условийĕсем тата Китайран продукци килсе тăма тытăнни те витĕм кӳчĕç. Вĕсем конкурссене хăйсен таварĕн хакĕ пĕчĕкрех пулнипе выляса илеççĕ. Чылай чухне вара кайран ку продукци пахалăхĕ тивĕçлĕ шайра пулманни палăрать.

Çавна палăртмалла. Концерн комбайн заводне Чăваш Ене куçарма йышăнчĕ. Анчах та йывăр машинăсем туса кăларассин производство циклĕ нумайрах вăхăт йышăнать, çавăнпа та Шупашкарта туса кăларнă пĕрремĕш комбайн та рынокра 2014 çулччен пулаймасть. Тем пулсан та ку вăл пирĕншĕн çĕнĕ производство, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем.

Хыпăнса ӳкме сăлтав çук. Çапах та кирек хăш вăхăтра та бюджет тупăшĕ чакнин пайне ытти çăл куçсемпе тата ытти майсемпе саплаштарма хатĕр пулмалла. Пирĕн электротехника кластерĕн организацийĕсен хăвачĕсем аван. Производство калăпăшне ӳстерме вĕсен майсем пур. Конкурссенче продукци пахалăхĕ енĕпе те, хаксем тĕлĕшпе те выляса илеççĕ. Çитменнине рынокри тĕнчере паллă компанисенчен те выляса илеççĕ. Нумай пулмасть иртнĕ «Релавэкспо» форум электротехника продукцийĕ туса кăларакан пирĕн предприятисен потенциалĕ пысăк пулнине кăтартса пачĕ. Раççейри пысăк энергетика компанийĕсем – «РусГидро», «Росатом», ФСК ЕЭС, «Холдинг МРСК» тата ыттисем пирĕн продукципе ытларах интересленеççĕ.

Республика патшалăхăн пысăк заказчикĕсемпе эффективлă çыхăнусем йĕркеленине Шупашкарти «Элара» предприяти продукцийĕпе тивĕçтерессипе Чăваш Ен Правительствипе акционерсен «Объединенная авиастроительная компания» уçă обществи меморандума алă пусни те лайăх çирĕплетет. Документа Шупашкара компани президенчĕ Михаил Погосян килнĕ чухне алă пуснă. Виçĕ çул хушши предприяти авиаци промышленноçĕ валли продукци парса тăрĕ, çуллен продукци калăпăшне 15 (!) процент ӳстерсе пыма палăртнă. Ку вăл сотрудниксен пысăк ĕç укçийĕ те, пур шайри бюджетсене хушма укçа-тенкĕ кайса тăрасси те. «Элара» умĕнче кăçалах компани валли 3 млрд тенкĕлĕх продукци тиесе ăсатас задача тăрать.

Ӳсĕмĕн тепĕр çăл куçĕ вăл – пĕчĕк тата вăтам бизнес. Вĕсене пула бюджетăн тупăш пайĕ хушăнать кăна мар, нумай енчен ĕççĕрлĕх шайĕ те ӳссе каймасть. Çулсерен эпир бюджета укçа-тенкĕ хывассине ӳстерсе пыратпăр, кăçал çур миллиард тенкĕне яхăн хывма палăртатпăр.

Страховани взносĕсем хывассине ӳстернĕ май юлашки вăхăтра уйрăм предпринимательсен шучĕ чакнă пирки те сăмах-юмах пулкаларĕ. Ку вăл пĕтĕм Раççей шайĕнчи тенденци. Çапах та çакă предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕнчен налук пухăнасси çине витĕм кӳреймерĕ. Ытларахăшĕ предпринимательсем шутĕнче ячĕшĕн шутланса тăнисем, активлă ĕçлеменнисем, апла пулсан налук тӳлеменнисем хăйсен предприниматель удостоверенийĕсене тавăрса панă.

**REGNUM ИА: – Промышленноç производстви чакни бюджет тупăшсем енĕпе пурнăçланасси çине витĕм кӳрĕ-и?**

– Тӳрех калатăп: пирĕн бюджет социаллă тĕллевлĕ, çавăнпа та пур енĕпе те хамăрăн обязательствăсене пурнăçлатпăр. Тĕп финанс документне хатĕрлесси çине эпир консерватла пăхатпăр. Хамăрăн тупăш виçине палăртнă чухне аталанăвăн ытлашши ăнăçлах мар кăтартăвĕсене тĕпе хуратпăр. Ăнланмалла пултăр тесе малалла тĕплĕнрех каласа паратăп.

2013 çулта пирĕн планпа пăхнă тупăш калăпăшĕ 20,251 млрд тенкĕ е 2012 çулхинчен 8,5 процент пысăкрах. Хамăрăн тупăшăн 57,6 проценчĕ икĕ тĕп налукран – организацисен тупăшĕнчен тата НДФЛ-ран пухăнать. Бюджетниксен ĕç укçине самай ӳстернĕ май уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук калăпăшĕ чакмалла мар.

Организацисен тупăшĕнчен налук пухăнассине иртнĕ çулах 3,5 процент ӳстерессине пăхса хунă. 2012 çул итогĕсемпе вăл 5 процентпа танлашрĕ. 2013 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕ тĕлне вара асăннă налук пухăнасси 27,3 процент ӳсрĕ. Пĕтĕмĕшле илсен ку вăл иртнĕ çулшăн расчетсене çĕнĕрен тунипе тата кăçалхи аванс тӳлевĕсемпе çыхăннă. Малалла кăштах кăтартусем чакасси пулĕ, анчах кирек епле пулсан та республика хăйĕн çине илнĕ обязательствăсене туллин пурнăçлĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

# Пысăк обязательствăсем тата кăмăл çирĕплĕхĕн çĕнтерĕвĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.)

**REGNUM ИА: – Оппонентсем шутланă тăрăх Чăваш Ен хăйĕн çине ытлашши пысăк социаллă обязательствăсем илнĕ, капиталлă ĕçсем пурнăçлас вырăнне бюджета «сисе ярĕ» кăна. Тĕрĕслĕх пур-и ку критикăра?**

– Ку вăл критика мар, чеелле хăтланни кăна. Темшĕн-çке оппонентсем патшалăхăн кризис умĕнхи инвестици калăпăшĕсене халхипе танлаштарса пăхсан унчченхи «пĕлĕтлĕ çулсенче» те инвестици калăпăшĕсене патшалăх парăмне вĕçĕм ӳстерсе пынипе çеç тивĕçтерме пултарни пирки шарлама кăмăл тумаççĕ.

Цифрăсем илсе кăтартам, вĕсем хăйсем çинчен хăйсемех каласа парĕç тесе шухăшлатăп. Раççей Финанс министерствин коллегийĕн апрелĕн 8-мĕшĕнчи анлă ларăвне тăратнă материалсенче Чăваш Ене бюджетăн пĕтĕмĕшле тăкакĕсен шутĕнче тĕп хатĕрсен хакне ӳстерме каякан тăкаксен виçи 16,1 процента çитнĕ 21 регион шутне кĕртнĕ. Раççейĕпе ку кăтарту вăтамран 13,4 процентпа, Атăл çи федераци округĕпе 13 процентпа танлашнă. Ăнлантаратăп: 15 процент урлă каçни вăл аталану бюджечĕ пулса тăрать те.

Кунсăр пуçне пĕтĕмĕшле капиталовложенисен калăпăшĕ чакса пынă чухне Чăваш Енре Атăл çи федераци округĕнче чи пысăк ӳсĕме – 144 процента çитерме пултарнă. Татах тепĕр цифра: республикăра бюджет инвестицийĕсене тĕп производствăна хывассин калăпăшĕ 2012 çулта 2,1 млрд тенкĕ ӳснĕ, 6,8 млрд тенкĕпе танлашнă.

Кунсăр пуçне патшалăх умĕнчи парăма та йĕркеллĕ тӳлесе тататпăр. Кăçал пирĕн 5,7 млрд тенкĕ таврса памалла, ку суммăран çуррине панă та ĕнтĕ. Çав вăхăтрах бюджет обязательствисене пурнăçлассипе те пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Акă вăл обществăлла финанссемпе пĕлсе усă курни пулать.

**REGNUM ИА: – Республика 2008 – 2009 çулсенче çул-йĕр тума илнĕ заем укçи-тенкине таврса парать-и?**

– Вăл шутра ăна та. Ун чухне Чăваш Енĕн парăмĕ икĕ хут ытла ӳссе кайнăччĕ, 2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 10 млрд тенкĕне яхăн çитнĕччĕ. Ун чухне кредиторсене пирĕн республикăра ĕçлесе илнĕ кашни тенкĕрен 80 пусне пама тивнĕ.

**REGNUM ИА: – Информаци тата политика калаçăвĕсем çуратакан тепĕр тема вăл Шупашкарти шыв хранилищин шайне хăпартассипе çыхăннă. Чăваш Ен асăннă тематикăпа иртерекен пур мероприятисене те йĕркеллĕ хутшăнать пулин те, ытларах чухне дискуссие хутшăнсах каймасть.**

– Мероприятисене хутшăнатпăр та, кирлĕ пулсан хамăр сăмаха та калатпăр. Ку темăпа эпĕ лару-тăрăва пĕтĕмпех пĕлсе тăратăп, мĕн пулса иртнине вĕçĕмех тишкеретĕп. Хăш-пĕр чухне мана регион ертӳçи пулнă май тавлашусене сахалрах хутшăнни пирки калаççĕ. Паянхи куна илес пулсан пĕтĕм документацие хатĕрлесе çитернĕ, регион сĕнĕвĕсене йышăннă, ыйтусене халăхпа сӳтсе явнă. Чăваш Ен хăйĕн позицине палăртрĕ, пĕр хут кăна та мар. Тата мĕн кирлĕ? Ку темăпа сас-хура сарса уйрăм политиксемпе обществăлла организацисем хăйсене кăтартма тăрăшаççĕ, политика спекуляцийĕ иртерсе хăйсен иккĕленӳллĕ авторитетне хăпартасшăн. Вĕсем лару-тăрăва кăткăслатма хăтланаççĕ, чылай чухне фактсене пăсса кăтартаççĕ.

Ман шутпа асăннă темăна политика сĕмĕ памалла мар. Тĕп вырăнта кунта электроэнерги туса кăларасси мар, питех те йывăр экологи проблеми. Ытларах чухне çакна ăса илме ыйтаççĕ 68-мĕш паллă майлисене. Электроэнерги халĕ те çителĕклĕ. Шыв çитменни, унăн пахалăхĕн проблеми вара пурне те пырса тивет. Ăшăх вырăнсен лаптăкĕ çулран-çул ӳсет, пур кăтартусем те çавна çирĕплетеççĕ. Çу кунĕсенче Атăл шывĕ симĕсленессисе те инçе мар. Хамăр ачасем, çитес ăру валли эпир мĕн хăварăпăр-ха? Çакă та вăл пурнăç пахалăхĕн кăтартăвĕ вĕт? Çакна проект документацийĕнче пĕтĕмпех палăртнă, çак сферăри профессионалсемпе экспертсем шута илнĕ. Çаплах вара ку тĕлĕшпе çĕр-шыв ертӳçисен шайлашуллă кирлĕ йышăну тăвасса шанса тăратăп.

**REGNUM ИА: – Халĕ кĕпĕрнаттăрсене пĕтĕм халăхпа суйлассине регион парламенчĕ суйлассипе улăштарма май туса пачĕç. Сирĕн шутпа Чăваш Енĕн суйлавăн хăш тĕсĕ чи юрăхли-ши?**

– Эпĕ регион ертӳçине пĕтĕм халăхпа тӳррĕмĕн суйлассишĕн. Чи малтанах çакă влаçа лайăхрах ĕçлеме хистет. Хăш-пĕр чухне мана республика Пуçлăхĕн должноçне федераци центрĕ лартнă, халăх суйламан – çапла вара çакă халăхăн интересĕсене хĕсĕрлени пулать тесе ӳпкелеме пăхаççĕ. Эпĕ çака мĕнле те пулин витĕм кӳрет тесе шухăшламастăп, мĕншĕн тесен Мускавпа регионсем хушшинчи хутшăнусен принципĕсене законодательствăпа çирĕп пăхса хунă. Кĕпĕрнаттăра епле майпа суйлани кунта пĕлтерĕшлĕ мар.

**REGNUM ИА: – Эсир хăвăр кĕрешĕве хутшăнма хатĕр-и?**

– Енчен те кĕскен: халăх енчен шанни пулать пулсан – суйлава каятăп.

**REGNUM ИА: – Нумаях пулмасть социологсем ыйтса тĕпченĕ тăрăх сире шанасси ӳссе пырать, вăтам шутпа вăл çĕр-шыв ертӳçисене шанассин шайĕнче темелле.**

– Çавна та шута илмелле: кандидатсене политика партийĕсем кăна сĕнме пултараççĕ, хăйсене хăйсем сĕнекенсем пулмаççĕ. Çавăнпа та йышăну тунă чухне халăх шаннипе пĕрлех кандидата сĕнекен çынна парти енчен мĕнле хак панине те, обществăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва та, ĕç кăтартăвĕсене те шута илĕç. Ытти тĕрлĕ самантсем те пулĕç.

**REGNUM ИА: – Юлашкинчен тата тимлĕхсĕр хăварма кирлĕ мар тепĕр ыйту пирки. Иртнĕ çул Чăваш Енре юлашки 20 çул хушшинче пĕрремĕш хут халăх йышĕ ӳсме тытăннине палăртнă. Ку тенденци сыхланса юлĕ-и? Ӳсĕм кăтартăвĕсем сыхланса юлччăр тесе республика Правительстви мĕнле мерăсем йышăнать?**

– Пĕтĕмпех патшалăхран кăна килет, йышăну тăвасси укçа-тенкĕпе кăна çыхăннă пулсан, ӳсĕм тенденцине сыхласа хăваратпăр тесе эпĕ çирĕплетсех калама пултаратăм. Эпир вара пурте лайăх ăнланатпăр вĕт-ха, йышăну комплекслă пулмалла, демографи лару-тăрăвĕ чылай факторсемпе çыхăннă. Çавăнпа та çитес вунă çуллăхра халăх йышĕ вĕçĕм ӳссе пырĕ тесе пĕр шухăшлăн татса калама май çук. Ку тĕлĕшпе патшалăх енчен сахал мар ĕç туса иртереççĕ паллах, ача çуратма хавхалантарассипе тĕрлĕ мерăсем йышăнаççĕ – уйрăммăн илсен кусем вĕсем федераци тата республика шайĕнчи ача амăшĕн капиталĕсем, нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕсем уйăрса пани, республикăра пурăнакан кашни çын пуçне тивекен вăтам тупăшран пĕчĕкрех тупăшлă çемьесене укçан тӳлени тата ытти мерăсем. Малашне те пулăшса пырăпăр, укçа-тенкĕ тĕлĕшпе те, патшалăх пулăшăвĕн ытти майĕсемпе те усă курăпăр.

Анчах та çемьере тата обществăра нравственноç тытăмĕ, ăс-хакăл пуянлăхĕ, пĕр-пĕрне хисеплесси, юратупа килĕшӳ çук пулсан нимĕнле укçа-тенкĕ те пулăшаймĕ. Кунпа пĕрлех тăнăçлăх тата ыранхи куна шанса тăни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакă пĕтĕмпех пур пулсан вара çемьесем те йышланĕç, хĕрарăмсем те ача çуратма шикленсе тăмĕç: çемьесенче пĕрремĕш кăна мар, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш ачасене те хавaспах кĕтĕç. Чăваш Енре çемьесем хăйсене мĕнле туйнине нумай енчен демографи статистики лайăх çирĕплетет: 2012 çулта ачасем çураласси 7,7 процент, çемьере иккĕмĕш ача çураласси 10,7 процент, виççĕмĕш ача çураласси 27,8 процент, тăваттăмĕш тата хыççăнхи ача çураласси 15,5 процент ӳснĕ.

Татах тепĕр саманта палăртса хăварнă пулăттăм. Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи пулăшăвăн пĕлтерĕшне никам та шута хумасăр тăма пултараймасть. Анчах та кунта нумай ачаллă çемьесем, çие юлнă хĕрарăмсем тĕлĕшпе йĕркеллĕ тимлĕх пулни, вĕсене пĕтĕм халăхпа иртерекен мероприятисене хутшăнма майсем туса пани пысăк тĕкĕ пулма пултарать. Тĕслĕхрен çие юлнă хĕрарăмсен пĕрлĕ çул иртернĕ фестивалĕ лайăх аса илĕвсем хăварчĕ. Шупашкар районĕнчи массăллă уявсенчен пĕринче вара пур артистсенчен ытларах шăпах амăшĕсем ача кӳмисемпе парадра утни асра юлчĕ. Муниципалитетсен хамăрăн пурнăç анлăшне нравственноç тĕлĕшĕнчен ырă çемье тĕслĕхĕсемпе тултарма тăрăшмалла, кун пек мероприятисем йĕркелессипе активлăрах пулмалла. Ку вăл пысăк çут ĕçĕ, кирлех пулсан – идеологи ĕçĕ те. Ăна влаç органĕсен граждан обществипе пĕрле туса пырас пулать. Раççей Президенчĕ лартнă задача пек, çемьери виçĕ ача социаллă норма пулса тăмалла.

**(Интервью кĕскетсе пичетленĕ, унăн оригиналĕпе REGNUM ИА сайтĕнче паллашма пулать).**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2013 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи 511 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă пулнăшăн:

– **Елена Александровна АЛЕКСАНДРОВĂНА**, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн эксперт специалистне;

– **Венера Ивановна ВОЛКОВĂНА**, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн эксперт специалистне;

– **Тамара Алексеевна МЕШКОВĂНА**, Муркаш ял тăрăхĕн тĕп эксперт специалистне.

2. Çынсен сывлăхне сыхлас ĕçе тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсенче активлă пулнăшăн – **Вячеслав Александрович ПРОКОПЬЕВА**, районти тĕп больницăн 2-мĕш номерлĕ больницин поликлиникин врач-хирургне.

3. Çыхăну отраслĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Эльвира Юрьевна ГРИГОРЬЕВĂНА**, районти çыхăну узелĕн специалистне;

– **Юлий Гурьевич СКВОРЦОВА**, районти çыхăну узелĕн электромонтерне;

– **Татьяна Самуиловна ЯШМОЛКИНĂНА**, районти çыхăну узелĕн электромеханикне.

Патриотла воспитани

## «Зарницăпа» «Орленок» вăййисем

Çитес эрнере, майăн 21-мĕшĕнче, Лантăш вăрманĕн уçланкинче çамрăк армеецсен "Зарница" тата "Орленок" çарпа спорт ăмăртăвĕсем усăлаççĕ. Виçĕ куна тăсăлакан вăйăсене районти пур шкултан та хутшăнаççĕ.

Çамрăк армеецсене яланхи пекех чылай интереслĕ конкурс, тупăшу, ăмăрту кĕтет. Çавăнпах тахçантанпа пыракан вăйăсем кашни шкул ачинех килĕшеççĕ. Ачасем хăйсене тĕрлĕ енчен тĕрĕслеме пултараççĕ-çке: «Вăй тата çаврăнăçулăх», «Шывра ишесси», «Теори блокĕ» тата ытти нумай-нумай конкурсра.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенчи "Зарница" тата "Орленок" командисем, çарпа патриотизм клубĕсем хушшинчи чи вăйлă та хастар командăсем республика вăййисенче район чысне хӳтĕлеме тивĕç пулĕç.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

## Китайри тĕл пулусем

Ĕçлĕ визитпа

***Аса илтеретпĕр, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев майăн 13 – 18-мĕшĕсенче Атăл çи федерации округĕн делегацийĕ шутĕнче – Китай Халăх Республикинче.***

**Майăн 15-мĕшĕнче** Михаил Игнатьев ытти делегатсемпе Чанша хулинче пулса курнă, кунти компанисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă.

Республика Пуçлăхĕ «Zoomlion Heavy Industry» предприятие пулнă. Кунта строительство техникипе оборудованине туса кăлараççĕ.

Кайран вара делегаци членĕсем «Sunword Intelligent Egiupment» фирмăна çитнĕ. Ку фирма нумай хутлă çурт-йĕр тăвассипе специализациленет. Предприяти строительство ĕçĕсен хăй хаклăхне чакарма май паракан технологисемпе усă курать. Хваттер туянакана 1 тăваткал метр лаптăк 33 пин тенкĕне ларать.

«Sany Heavy Industry» заводра автомашинăсен бетон насусĕсене, буксир бетон насус-прицепĕсене, стационарлă бетон тата асфальт завочĕсене, çул-йĕр катокĕсене тата ытти техника хатĕрĕсене туса кăлараççĕ.

Михаил Игнатьев çавна палăртнă. Китайри тавар туса кăларакансен экономика технологийĕсем Чăваш Ен строительство индустрийĕн организацийĕсене интереслентерме пултараççĕ. Пирĕн электротехника кластерĕн предприятийĕсен продукцийĕ вара Китайри партнерсемшĕн пĕлтерĕшлĕ.

Промышленноç хăвачĕсене çитсе курнипе пĕрлех Чанша хулинче Атăл çи федераллă округĕн делегацийĕ Хунань провинцийĕн ертӳçисемпе тĕл пулнă.

**Майăн 16-мĕшĕнче** Чунцин администраци округĕнче тĕл пулусем иртнĕ. Кунта 30 млн ытла çын пурăнать. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Чунцинра пурăнмалли çурт-йĕр строительствинче, машинăсем, автомашинăсем тăвассинче, авиаци промышленноçĕнче, нефтехимире, металлургире пурнăçа кĕрсе пыракан анлă калăпăшлă проектсемпе, инвестицисем хывма патшалăх мĕнле мерăсем йышăннипе интересленсе паллашнă.

**Майăн 17-мĕшĕнче** Михаил Игнатьев электрон промышленноçĕн технопаркне çитсе курнă. Компьютер техники туса кăларассипе чи пысăк производствăсенчен пĕри кунта вырнаçнă.

Çавăн пекех транспортпа логистика центрĕнче пулнă. Паян Китайра логистика çĕр-шывăн экономика аталанăвне палăртакан малашлăхлă отраслĕсенчен пĕри тесе йышăнаççĕ. Центра пĕтĕмпех автоматизациленĕ тата вăл автомобиль, шыв тата чукун çул транспорчĕпе усă курассипе çыхăннă логистика операцийĕсене пурнăçлать.

## Вăхăт ыйтакан, пурнăçпа çыхăннă урок

Электрон услугăсем

Аслă классенче вĕренекенсемшĕн çак юн кун республикипех пачах та хăнăхман урок иртрĕ: учительсем – Чăваш Республикин информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин специалисчĕсем, кĕнеке вырăнне – gosuslugi.ru интернет-страница.

Çапла майпа кăнтăрлахи 12 сехетре пуçланнă видеоурок муниципалитет тата патшалăх услугисене электрон майпа тивĕçтересси çинчен пулчĕ. Видеоконференци мелĕпе иртнĕ урока икĕ министр – В. Иванов тата В. Андреева хутшăнчĕç. Вĕсем çĕнĕ технологисем паянхи пурнăçра пысăк та пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннине палăртрĕç. Çавăнпа та çамрăксене порталти электрон услугисемпе усă курма чĕнсе каларĕç. Çамрăксем çак порталпа ĕçлеме хăнăхсан вара аслă ăрурисене те çăмăллăнах пулăшма пултарĕç. Апла пулсан вĕсен ашшĕ-амăшĕсен те, аслашшĕ-асламăшĕсен те тĕрлĕ ĕç хучĕсем тума вăхăт перекетленĕ.

Урок вăхăтĕнче ачасене малтанах çак порталта регистрациленме вĕрентрĕç. Тĕслĕх вырăнне Чăваш Рсепубликинчи ĕçпе тивĕçтерекен службăн пĕр услугине – çул çитменнисене вĕренӳрен пушă вăхăтра ĕçпе тивĕçтерессипе усă курчĕç. Çак услугăна усă курас тесен çамрăксен ытлашши нимех те тумалла мар, заявкăра ыйтнине çырса тултармалла тата телефон номерне кăтартмалла. Çак заявка ĕçпе тивĕçтерекен службăн специалисчĕ патне çитет, вара вăл шкул ачипе çыхăнать.

Паянхи куна Чăваш енре пурăнакансем Пĕрлехи портала патшалăхăн регион тата муниципалитет тивĕçтерекен 69 услугăпа усă курма пултараççĕ. Хальлĕхе Порталта республикăри 18 пин ытла çын регистрациленнĕ.

Пирĕн районта çак урока итлеме, пурнăçри çĕнĕлĕхпе паллашса ăна алла илме, шел пулин те, пурин те май килмен. Муркашри вăтам шкулта, сăмахран, Шупашкарти вĕренӳ институтĕнче ниепле те çыхăнма пулмарĕ. 10 «Б» класра вĕренекенсем, темĕнле чăтăмлă пулчĕç пулин те, интереслĕ урока пăхаймарĕç. Хăйсем вара ку таранччен çак услугăсем пирки илтменнине, вĕсем çинчен пĕлменнине каларĕç. Апла пулсан урок кирлĕ пулнă. Телейлисем пулнă-ши тесе районти хăш-пĕр шкулсемпе телефон урлă çыхăнтăмăр: Чуманкассинчи, Ильинкăри, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсенче те лару-тăру çавăн пекех пулнă. Пурĕ вара республикăри 48 шкулта çак урока итленĕ.

**ЧР информполитикин материалĕпе усă курса хатĕрленĕ.**

Н.В. Никольский çуралнăранпа – 135 çул

# Тивĕçĕсене кура – сумĕ



Чăвашсен паллă ăсчахĕ, истори ăслăлăхĕсен докторĕ, чăвашсен пĕрремĕш хаçатне никĕслекенĕ Николай Васильевич Никольский çуралнăранпа ыран 135 çул çитет.

Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ Н. Никольский паян пур чăвашшăн та питĕ сумлă та паллă çын. Шăматри земство училищине, кайран Шупашкарти духовнăй училище пĕтернĕ, хыççăн вара Хусанти духовнăй академине вĕренсе пĕтернĕ. Н. Никольский хĕрарăмсене учитель пулма хатĕрлекен земство шкулĕнче, Хусанти учительсен семинарийĕнче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ. Хусанти университетăн доценчĕ тата профессорĕ, Çурçĕр-хĕвел тухăç археологи институчĕн деканĕ тата профессорĕ, Хĕвел тухăç консерваторийĕн директорĕпе профессорĕ, Хĕвел тухăç педагогика институчĕн профессорĕ – ĕç анлăшĕ çав тери пысăк пулнă унăн.

Хусанти духовнăй академине вĕреннĕ чухнех вăл Атăл çи тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен историйĕпе тата этнографийĕпе кăсăкланма тытăннă. Н. Катанов тюрколог, В. Магницкий этнограф тата Н. Ашмарин чĕлхеçĕ ун çине уйрăмах пысăк витĕм кÿнĕ.

1905 çулта Н. Никольский Хусан кĕпĕрнаттăрĕ патне чăвашсен эрнесерен тухса тăракан «Хыпар» ятлă хаçатне кăларма ыйтса çитет. 1906 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче Шалти ĕçсен министерствин пичет енĕпе ĕçлекен тĕп управленийĕнчен хаçат кăларма ирĕк паракан свидетельствăна алла илме пултарать. Çапла май Н. Никольский чăвашсен пĕрремĕш хаçатне никĕслекенĕ тата хаçатăн малтанхи 22 номерĕн редакторĕ пулса тăрать.

Пурнăç тăршшĕпех ăсчах наукăпа тĕпчев енчен питĕ тулăх ĕçлет: «Султалăк кĕнеки», «Русско-чувашский словарь», «Народное образование чуваш», «Взгляд чуваш на воинскую повинность», «Конспекты по этнографии чуваш», «Краткий чувашско-русский словарь», «Народная медицина» тата ытти нумай-нумай ĕç хатĕрлет. Вăл шутра – 250 томран тăракан ал çырăвĕсен пуххи те. Унăн ĕçĕсем Атăл çи халăхĕсен историйĕпе культуринче питĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ.

1946 çулта Николай Васильевич питĕ пысăк калăпăшлă «Прошлое чувашского народа от Великой Булгарии до Великой революции» ятлă материала çырса пĕтерет. Тепĕр çулхине Н. Никольские унăн тивĕçĕсене кура истори ăслăлăхĕсен докторĕн степенĕпе чыслаççĕ.

Ку паллă самант хыççăн та Н. Никольский чылай ĕçлет. Чăваш халăхĕн калапăшĕсене пухса чăвашла тата вырăсла чĕлхепе пичетлесе кăларать.

Паллă ăсчах 1961 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче Хусанта çĕре кĕрет.

Паян вара Чăваш Енри патшалăх кĕнеке палатинчи фондсенче Н. Никольскийăн 19 кĕнеки, 100 ытла наука ĕçĕ типтерлĕн упранать.

**О. ВАСИЛЬЕВА,**
**Чăваш Енри патшалăх кĕнеке палатин фончĕсен тĕп управçи.**

Çуллахи кану

# Лагерьте канма вăхăт çитет

Ачасен сывлăхне пысăк тимлĕх уйăрмалли каламасăрах паллă темелле, анчах та цифрăсен ĕнентерĕвĕ пысăкрах пулнине кура пирĕн районти вĕренекенсен сывлăх шайĕпе вĕсем урлă паллашар-ха. Вĕренекенсен 18 проценчĕ кăна врачсем сывлăхлă тесе палăртнă, ачасен 76 проценчĕ – сывлăхăн 2 ушкăнне кĕрет, ыттисем – 3–4 ушкăнсенче. Çапла вара ачасен сывлăхĕ çулталăкĕпех тимлĕх ыйтать. Сывлăха çирĕплетме тĕрлĕ майсем пур. Вĕсенчен пĕри – çуллахи вăхăтра ĕçлекен лагерьсенче канни.

«Пирĕн районта ачасен сывлăхне çирĕплетме тата вĕсен канăвне йĕркелеме кăçал пурĕ 7 миллион та 340 пин тенкĕ уйăрнă. Вĕсенчен 3 миллион та 345 пин те 700 тенкĕ – шкулсем çумĕнчи лагерьсен ĕçне йĕркелеме, хула тулашĕнчи лагерьсенче сывлăха çирĕплетме тата канма кайма – 3 миллион та 417 пин те 600 тенкĕ. Кунсăр пуçне ачасен канăвĕпе сывлăхне çирĕплетме майсем туса парассинче кăçал çĕнĕлĕх те пур – пĕрремĕш хут палаткăсен лагерĕсене йĕркелесси», – çуллахи вăхăтра ачасен сывлăхне çирĕплетесси тата вĕсен канăвне йĕркелесси пирки пуçарнă сăмахра район администрацийĕн вĕренÿпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова çапла палăртрĕ.

Асăннă укçа-тенкĕ сумми питĕ пысăк. Çавăнпа та унпа вăхăтра тĕллевлĕ усă курасси пысăк яваплăхпа çыхăннă. Ку çапла пулса пырать те. Акă хыçа юлнă çуркуннехи каникулта сывлăха çирĕплетекен «Чайка» санатори комплексĕнче тата «Чувашиякурорт» санаторийĕн çулталăкĕпех ĕçлекен «Жемчужина» лагерĕнче пирĕн районти 306 ача канса сывлăха çирĕплетнĕ. Çуллахи вăхăтра вара хула тулашĕнчи лагерьсенче 150 ача канĕ.

Шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли, ĕçпе кану тата профиль лагерĕсене çÿрес текен ачасен ашшĕ-амăшĕсенчен хальхи вăхăтра заявкăсем йышăнаççĕ. Шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли тата ĕçпе кану лагерĕсенче пĕр смена 21 куна тăсăлать, профиль лагерĕсенче – 10 куна.

Июнĕн 3-мĕшĕнче шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли тата профиль лагерĕсем ĕçе пуçăнаççĕ. 24 шкулта пурĕ 2420 ачана явăçтарасси паллă. Кунсăр пуçне 14 çул тултарнă 600 ачана яхăн районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă вăхăтлăх ĕçсене явăçтарма та палăртса хунă.

Палаткăсен лагерĕсене йĕркелесси çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» вăййисемпе тата ОБЖ предмечĕн вĕренÿ программине килĕшÿллĕн 10-мĕш класра вĕренекен çамрăксен 5 кунлăх сборĕпе çыхăнать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Юрмекей ăраттинчи ăсчах

Николай Васильевич Никольские **(сăн ÿкерчĕкре сулахайри)** эпĕ мĕн ачаранах астăватăп. Вăл Хусантан тăван яла кашни çуллах килетчĕ. Кунта вăл хăмаран çапса тунă, çÿле турпас витнĕ беседкăра пурăнатчĕ. Ир-ирех тăрса яланах темĕн çыратчĕ вăл. Ман асăма вăл ырă кăмăллă, никама та пĕр усал сăмах та каламан, юратмалла çын сăнарĕпе кĕрсе юлнă.



Иван Дмитриевич Никитин, ман асатте Дмитрий Никитич Юрмекей каласа кăтартнисем тăрăх тата архив материалĕсем çирĕплетнĕ тăрăх Николай Васильевичăн хушамачĕ ĕлĕк Никольский пулман.

Юркка ывăлĕ Юрмекей пулнă, вăл 1733 çулта Кĕртекассинче çуралнă, Купăрляна куçса килнĕ. Малашне Юрмекей ячĕ пулас профессор маçаккăшĕн хушамачĕ тата çав вăхăтрах ял ячĕ пулса тăнă. Юрмекей ялта чи малтан Христос тĕнне йышăннă. Ăна Василий Федорович Юрмекей тесе чĕннĕ. Унăн кĕçĕн мăнукĕсенчен пĕри – Василий (Шăматри прихут шкулĕнче вĕреннĕ) çак хушамата «тивĕçлĕ пулать». Вăл шкулта вĕреннĕ вăхăтра унти лайăх вĕренекен ачасене суйласа илес тĕллевпе Хусанти мишавай (çĕр виçекен) пырать. Василий вара мишавая килĕшнĕ чи лайăх вĕренекен пулнă мĕн. Ашшĕ-амăшĕ ирĕк панипе Василие Хусанти мишавайсен шкулне вырнаçтарнă. Патшалăх пурлăхĕсен управленийĕнче Василий Юрмекей экзамен тытать. Çав управлени пуçлăхĕ Никольский хушаматлă вырăс çынни пулнă. Унăн ачасем пулман. Вăл экзаменра мала тухнă ачана – Василие хăйĕн хушаматне парать те çĕр виçекенсен ĕçне тĕплĕнрех вĕрентме ăна Вятка хулинчи техника училищине ăсатать. Вĕренсе тухса мишавайра таçта та ĕçлет. Тĕнче курнă хыççăн 1869 çулта хăй çуралнă яла таврăнать. Çав çулла, июлĕн 28-мĕшĕнче, Ишекри Агрепина Степановăна венчете тăрать.

Василий Никитич ял хуçалăх ĕçĕпе ĕçлеме тытăннă. Ашшĕн анкартинче икĕ çĕнĕ пÿрт (пĕрне ашшĕ валли, теприне хăйне валли) лартнă. Уйра çил арманĕ тунă, анкартинче пысăк сад ĕрчетме тытăннă. Пыл хурчĕсем тытнă. Ял варринчи пушă выртакан Иришка çырмине алăпа, кĕреçепе пÿлсе Дмитрий Никитичпа пысăк пĕве пĕвелесе тунă. Унта карас пуллине ĕрчетнĕ. Çав вăхăтрах мишавай ĕçне те туса пынă.

Никольскийсен çемйинче 9 ача çуралнă. Пулас профессор Николай çемьепе 5-мĕш ача пулнă. Ашшĕпе амăшĕ пур ачине те вĕрентесшĕн пулнă. Ывăлĕсем Шĕмшеш салинчи (Элĕк районĕ) прихут шкулĕнче, хĕрĕсем Сĕрпÿри хĕрарăмсен мăнастирĕнче вĕреннĕ. Меркурий, Зосим, Николай, Валерий Шупашкарта духовнăй училище вĕренсе пĕтернĕ. Кайран Зосим Хусанти учительсен семинарине вĕренме кайнă, тепĕр виçĕ ывăлĕ – Хусанти духовнăй семинарине.

Николай семинаринче ытти кирлĕ чĕлхесĕр пуçне тата француз, кряшенски чĕлхисене вĕреннĕ. Николайăн ашшĕ хăйĕн ывăлне ялти чиркÿре ĕçлекен çын тăвасшăн пулнă. Наукăпа интересленекен Николай вара духовнăй академире вĕреннĕ чухне Хусанти университета историпе этнографи, чĕлхепе литература çинчен лекцисем итлеме çÿренĕ. Çапла май пурнăçне ăслăлăх ĕçĕпе çыхăнтарнă, халăха çутта кăларас енĕпе чылай тăрăшнă.

**Н. ПАНТЕЛЕЙМОНОВ.**

# Волейбол – Никольский ячĕпе

Майăн 11-мĕшĕнче Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче иртнĕ волейбол ăмăртăвне чăвашсен пĕрремĕш хаçатне пуçарса янă Н. Никольские халалларĕç. Вăййа хутшăнас тесе Етĕрне хулин команди, Сĕнтĕрвăррипе Куславкка хулисен пĕрлештернĕ команди те çитнĕ. Пирĕн районти «Шаптак» команда, Йÿçкасси ял тăрăхĕн команди тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн команди те вĕсемпе пĕрле вăй виçнĕ.

Шаптаксем малтанах кашни вăйăрах çĕнтерсе пынă, çавăнпах вăй сахал мар пĕтнĕрен ĕнтĕ ăмăрту вĕçнелле командă самаях хавшаса çитнĕ – тăваттăмĕш вырăна кăна тухма пултарнă. Анчах та пĕр ялта 55 çул урлă каçнă арçынсен командине пухма пултарни те пĕлтерĕшлĕ. Сăмах май каласан çак ÿсĕме çитнисене пухма çăмăлах мар пулĕ, чăнах та пуçарулăх вăйлă пулни кирлĕ. Эппин вăй-хал та, хастарлăх та пур-ха. Вĕсем пулмасан «Ильичсем» те виççĕмĕш вырăна тухаяс çукчĕ. Куçса çÿрекен кубока вара Сĕнтĕрвăррипе Куславккасен командисем тивĕçнĕ, иккĕмĕш вырăнта – Йÿçкассисем. «Ăмăртăва чăн-чăн энтузиастсемех пуханчĕç, питĕ интереслĕ пулчĕ, хамăр кăмăла туллин тивĕçтертĕмĕр», – тет ăмăртăвăн тĕп судйи Георгий Лукин. Çакăнпа пĕрлех вăл район пуçлăхне, вырăнти хуçалăхăн ертÿçине И. Николаева тата ял тăрăхĕн пуçлăхне С. Никифоровăна тав сăмахĕ калать. Ăмăртăва йĕркелесе тивĕçлĕ ирттересси çак ертÿçĕсен пулăшăвĕ питĕ курăмлă пулнине палăртать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Редакци почтинчен

# Уяв килĕшрĕ

Аслă Çĕнтерÿ кунне халалланă митингсене Катькас ял тăрăхĕнче кăçал питĕ лайăх йĕркелерĕç. Ял тăрăхĕнчи тăвата палăк умне çитсе эпир – ветерансем, шкул ачисем, ял тăрăхĕнчи активлă çынсем – чечек кăшăлĕсем хутăмăр. Ачасем хатĕрленĕ концертсем кăмăла кайрĕç. Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем уява чыслăн ирттерме хатĕрленни уйрăмах палăрчĕ. Уява Александр Степанов вĕрентекенсен çав тери кăмăллă ертсе пычĕ, И. Петрова та чылай тăрăшнине палăртрĕç. Ачасем вара Шупашкар артисчĕсенчен кая мар, вĕсен çи-пуçĕ те питĕ илемлĕ. Вĕсене çĕлеттерме ашшĕ-амăшĕсем пулăшнă терĕç.

Пире, ветерансене, сума сунăшăн, хисепленĕшĕн эпир çав тери савăнтăмăр.

**О. ТЯМИНА,**
**ветерансен вырăнти канашĕн ертÿçи.**

Редакци почтинчен

# Чăваш чĕлхине юратса, культурăпа интересленсе

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкулта иртнĕ чăваш чĕлхипе литература эрни пирки редакцие **О. Вишнева вĕрентекен çырса пĕлтерчĕ**. Чылай ĕç пурнăçланă шкулта: 8–9 классенче вĕренекенсем «Хунав» стена хаçачĕ кăларнă. Хаçатра И. Яковлев Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ çыравçăсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне сăнласа панă. И. Яковлев халалне, унăн калавĕсене çырнă. «Н. Никольский çуралнăранпа 135 çул» презентаци кураве (8–9 классем) те иртнĕ. Шкулта пулса иртнĕ тĕрлĕ вăйă-конкурссене чылай ача хутшăннă, ултă ача хăйсен пĕлĕвне республикăра çырнă чăваш диктантĕнче тĕрĕсленĕ. Çак эрнелĕхре пуçламăш класра вĕренекенсем те хастар пулнă. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Ольга Вишнева акан 22-мĕшĕнче Чăваш Республикин вĕренÿпе çамрăксен политикин министерстви ют çĕр-шыв чĕлхисен „Ăнăçулăх чĕлхи" шкулĕ ирттерекен „Чăваш чĕлхине аслă класра вĕрентесси" семинара та хутшăннă.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан та хыпар çитрĕ. **В. Крючкова çырса пĕлтернĕ** тăрăх кунта чăваш юррисен конкурсĕ питĕ интереслĕ иртнĕ. Конкурспа пĕрлех кунта кашни класс хăй хатĕрленĕ презентацие паллаштарнă. Апрелĕн 25-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта Америкăри учитель Рональд Холмс та пулнă иккен. Унпа ачасем çăмăллăнах акăлчанла калаçнă. Рональд Холмс чăваш культурине интереснет, пĕлтĕртенпе Чăваш Енри чиркÿсене пулăшать. Конкурсра илемлĕ юрă чылай янăрарĕ, чи пĕлтерĕшли вара çак илемлĕ юрăсен чĕлхи ачасене çывăх пултăр, вĕсем тăван чĕлхепе калаçма пултарччăр.

Мăн Сĕнтĕртен çитнĕ тепĕр çыруран, ăна **Т. Огадерова шăрçаланă**, „Мечта" ача-пăча садĕнче ачасене воспитани парассинче культура ыйтăвĕсене тĕпе хуни палăрать. Акă Мăнкун уявне халалласа кунта пысăк курав йĕркеленĕ: ÿкерчĕксем, аппликацисем, ал ĕçĕсем. Малтанах вара ачасене уяв çинчен каласа панă, православи тĕнне тытакансен йăли-йĕркипе паллаштарнă.

**Н. Кондукторова** вара пирĕн пата Катькасри пуçламăш шкул – ача садĕнче районти пуçламăш классене вĕрентекенсен тата воспитательсен методика пĕрлешĕвĕн ларăвĕ иртни пирки хыпарлать. Ĕç программи питĕ анлă пулнă: уçă урoксем, вĕсене тишкерни, фольклор уявĕ, докладсем, ташă марафонĕ... Калаçу, пĕтĕмĕшле илсен, шкулчченхи вĕренÿпе воспитани тата пуçламăш сыпăкри вĕренÿпе воспитани çыхăнăвĕ пирки пулнă. Катькасри пуçламăш шкул – ача садĕнче ĕçлекенсем пултарулăх концерчĕпе те савăнтарнă. Çак коллектив (ăна Л. Сергеева ертсе пырать) туслă та пултаруллă пулни кунта çÿрекен ачасемшĕн ырă тĕслĕх вырăнне пулнине палăртать хăйĕн çырăвĕнче Н. Кондукторова.

# Çĕр ĕçченĕ акара, ыйхăра камсем вара?

**Çур аки – 2013**

Çултaлăкпа çултaлăк пĕр килмест тенĕ пек çын кăмăлĕ те тĕрлĕрен пулать. Пĕрне шăрăх мал туртăмлă ĕçлеме памасть, тепĕрне çумăрлă çанталăк ура хурса пырать, виççĕмĕшĕ çĕнĕ технологисене çул парассишĕн аппаланать, тăватăмĕшĕ çур аки çитнине сисмест. Çакна паян çур аки вăй илнĕ уй-хирти ĕçсене чăнласа çиччĕ виççе туса пыракансем йывăрлăхсем умĕнче пуç усманнинчен те, ыйхăрисем трактор кĕрлевĕне те тĕлĕкрен вăранманнинчен те асăрхама пулать. Пĕрисем çĕр-шыв программисемпе туллин усă курма тăрăшаççĕ, иккĕмĕшсем вĕсене тиркеме сăлтав шыраççĕ. Пĕрремĕшсен ĕç культури шурă ăмсану çуратать, иккĕмĕшсен – тарăхупа вĕчĕрхенӳ. Çапла вара паян уй-хирте хресчен умĕнче тăракан пур ыйтăва та татса панă теме çук-ха. Çурхи кун çултaлăк тăрантарнине шутласан çур акире епле ĕçленипе пирĕн тухăçлă хĕл касмалла-çке.

**ТĔЛЛЕВСЕМ ПАЛЛĂ**

